# Çуралнă кун тĕлне — ятарлă курав

Çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнче Чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи 78 çул тултармаллаччĕ. Шел, 2006 çулхи нарăсăн 21-мĕшĕнче вăл пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ.

Хăй çук пулсан та ячĕ, ĕçĕсем манăçмаççĕ. 2009 çулта Чăваш наци библиотекинче Геннадий Айхин асăну залне йĕркеленĕ. Тĕллевĕ пархатарлă: поэтăн пултарулăх еткерне халăх патне çитересси. Кунта шкул ачисемпе студентсем валли куравсем, экскурсисем ирттереççĕ, коллекцири документсем тăрăх тĕпчев ĕçĕсем çыраççĕ.

Геннадий Николаевичăн çуралнă кунĕ тĕлне çуллен курав йĕркелеççĕ. «Г.Айхи поэзийĕн тĕнчи», «Аслă çул пуçламăшĕ», «Ӳнерçĕ кĕнеки. Н.Дронников кăларăмĕсем», «Г.Айхипе пĕр шухăшлисем» ятсемпе ирттернĕскерсенче ентешĕн тĕрлĕ çулта кун çути курнă кĕнекисем вырăн тупнă. Вĕсем пурте Наци библиотекинчи сайра тĕл пулакан пайри «Айгиниана» коллекцире упранаççĕ. Унти чылай документпа кăларăма хăй вăхăтĕнче Геннадий Николаевич парнеленĕ пулнă, ыттине – çывăх тăванĕсемпе тус-юлташĕ.

Асăннă коллекцире видеофильмсемпе дисксем те, сăн ӳкерчĕксемпе архив документчĕсем тата ытти те упранаççĕ, пурĕ 800 яхăн управ единици.

Н.СМИРНОВА.